26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ОКТЯБРЬ 8 ЭРНЕКУН 200(6437) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЕРЕМЕНКĂНА

Калинин фрончĕн çарĕсем, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ обоpонине татса кĕрсе, паян, октябрĕн 7-мĕшĕнче, икĕ кун хаяррăн çапăçнă хыççăн НЕВЕЛЬ хулине — нимĕçсен çурçĕр-хĕвеланăç енчи тĕреклетнĕ пысăк пунктне тата операцисем тĕлĕшпе питех те кирлĕ çулйĕрсен тĕввине — тытса илнĕ.

НЕВЕЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче ГАЛИЦКИЙ генерал-лейтенантăн, ШВЕЦОВ генерал-майорăн çарĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ПАПИВИНĂН летчикĕсем чапа тухнă.

Пуринчен те ытларах çаксем чапа тухнă:

МИХАЙЛОВ генерал-майорăн 21-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, БУКШТЫНОВИЧ полковникăн 28-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ЧИННОВ полковникăн 360-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ЧЕРНОВ полковникăн 47-мĕш стрелковăй дивизийĕ, БАКУЕВ полковникăн 31-мĕш стрелковăй бригади, КОЧЕРГИН полковникăн 78-мĕш танковăй бригади, ЧУПРОВ подполковникăн 236-мĕш танковăй бригади, ПОДКОВСКИЙ подполковникăн 143-мĕш танковăй бригади, ФРОЛОВ подполковникăн 163-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, БЫДАНОВ полковникăн 827-мĕш гаубицăллă артиллери полкĕ, ЗИМИН полковникăн 240-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ тата КУЧМА полковникăн 211-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, НЕВЕЛЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене „НЕВЕЛЬСКИ“ тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:

21-мĕш Гвардейски Невельски стрелковăй дивизи,
28-мĕш Невельски стрелковăй дивизи,
360-мĕш Невельски стрелковăй дивизи,
47-мĕш Невельски стрелковăй дивизи,
31-мĕш Невельски стрелковăй бригада,
78-мĕш Невельски танковăй бригада,
236-мĕш Невельски танковăй бригада,
143-мĕш Невельски танковăй бригада,
163-мĕш Невельски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
827-мĕш Невельски гаубицăллă артиллери полкĕ,
240-мĕш Невельски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
211-мĕш Невельски штурмовой авиаци дивизийĕ.

Паян, октябрĕн 7-мĕшĕнче, 22 сехет те 30 минутăра пирĕн Тăван çĕршыв столици МУÇКАВ НЕВЕЛЬ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене çĕр çирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ лайăх çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, Невель хулине ирĕке кăларнă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешўре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 6-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Октябрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 16 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çўлелле перекен артиллери тăшманăн 59 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Витебск енчи пĕр участокра нимĕç пехоти, танксем тата штурмлакан авиаци пулăшнипе, тăвата хутчен контратака тунă. Пирĕн чаçсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн соединени чаçĕсем, малалла куçса, 200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче 8 тупă, 38 пулемет, боеприпассен тата çар техникин пурлăхĕн 2 склачĕ пур.

Гомель енче пĕр соединени чаçĕсем юлашки кунсенче хăйсен позицийĕсене самаях лайăхлатнă. Çав çапăçусенче 800 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 12 тупă, 6 миномет, 49 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр районра пирĕн боецсем [illegible] аркатса тăкнă.

Пирĕн летчиксем, сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 21 самолетне персе ўкернĕ.

Могилев енче тăшманăн автоматчикĕсем 5 танкпе 277-мĕш Рославльски стрелковăй дивизийĕн пĕр подразделенине атакăланă. Совет боецĕсем тăшмана пур тĕслĕ хĕçпăшалтан та пеме тытăннă. Бронебойщик красноармеец Баранов юлташ нимĕçсен 3 танкне юрăхсăр кăларнă. Çĕмĕрлменнĕ икĕ танкĕ вара хăвăртах тарса пытаннă. Танксем хăттĕсĕр тăрса юлнă нимĕç автоматчикĕсене пирĕн чаçсем пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем нимĕçсене вăйлă çапса аркатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли выртса юлнă. Артиллери батарейине тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен пĕрле 13.000 тонна тăракан 2 суднине шыва путарнă.

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ тăшман портне тапăннă. Тăшман рейдĕнче тăракан 1500 тонна тăракан судна шыва путнă. Çавăн пекех тата тăшман пехотине турттарса пыракан икĕ десант баржине тата буксирсем турттарса пыракан катера шыва путарнă.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем тата ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, уборка вăхăтĕнче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн, государствăна тырă парса татнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăн Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

26. Шăмăршă районĕнчи **«Заря свободы»** колхоз (колхоз председателĕ **Гиазов** юлташ). Колхоз тырпула 12 ĕç кунĕнче лайăх ĕçлесе пухса кĕртнĕ. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса çĕрулми парса татнă.

27. Шăмăршă районĕнчи **«Маяк революции»** колхоз (колхоз председателĕ **Соболев** юлташ). Колхоз тĕштырăсене тата çĕрулмине вăхăтра пухса кĕртнĕ. Кĕлтесене капана хывса, авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

28. Шăмăршă районĕнчи **Космовский ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Космовский** юлташ). Колхоз тĕштырăсене кĕске срокра тата пĕр таккаламасăр пухса кĕртнĕ. Кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

29. Шупашкар районĕнчи **«Знамя революции»** колхоз (колхоз председателĕ **Кириллов** юлташ). Колхоз тĕштырăсене, лайăх ĕçлесе, вăхăтра пухса кĕртнĕ. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса тата авăн çапса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

Вăрçăри пек, фронтри пек кĕрешер!

Хăйĕн никам çĕнтерейми вăй-хăватне, хăйĕн пултарулăхĕпе паттăрлăхне пирĕн Хĕрлĕ Çар кăçалхи çу вăхăтĕнче татах та тепĕр хут кăтартса пачĕ. Вăл нимĕçсен çуллахи наступлени планĕсене аркатса ячĕ, Хĕрлĕ Çар хĕлле çеç наступлени тума пултарать текен юмаха сирсе ячĕ, хăй çулла та хăватлăн тапăнса пыма пултарнине кăтартса пачĕ. Çĕршер хуласемпе пиншер ялсене ирĕке кăларса, нимĕç захватчикĕсене Днепр шывĕн леш енне сирсе ывăтрĕ.

Чăваш халăхĕн ывăлĕсем те отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартса çапăçаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çак вăрçăра пирĕн халăхăн 6 ывăлĕ Совет Союз Геройĕн ятне илчĕç, 4.515 çын Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Тылри ĕççыннисем те вăрçă хушнă пек, фронт ыйтнă пек ĕçлеме тăрăшаççĕ. Рабочисем фронта çителĕклĕ чухлĕ хĕçпăшалпа боеприпассем парса тăнă пекех, колхозниксем Хĕрлĕ Çара ытлăн-çитлĕн апат-çимĕç парса тăрассишĕн кĕрешеççĕ. Республика кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене чылайĕшне ăнăçлăн тата лайăх сроксенче туса ирттерчĕ.

Уйрăмăнах Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. Ку районри колхозсем нумайĕшĕ гектар пуçне çĕршер пăт ытла тырă пухса илчĕç. Район государство умĕнчи парăмсене пурне те парса татрĕ. Паян эпир Вăрнар районĕнчи колхозниксен рапортне пичетлесе кăларатпăр. Вĕсем хăйсен рапортĕнче çапла çыраççĕ:

«...Эпир хамăрăн сăмаха пурнăçа кĕртрĕмĕр... Районри колхозсем нумайĕшĕ гектар пуçне çĕршер пăт тырă туса илчĕç... Государство умĕнчи хăйсен обязательствисене пур культурăсем тĕлĕшпе те тултарчĕç: тырă памалли плана 100 проценчĕпех, аш-какай памалли плана 135 процент, сĕт памалли плана 102 процент, çăмарта—102 процент, çăм—109 процент, утă—100 процент, çĕрулми памалли плана 104 процент тултарчĕç».

Ку районри колхозсем халех ĕнтĕ килес çулхи вăйлă тырпулшăн социализмлă ăмăрту пуçарса янă, вĕсем килес çул та гектар пуçне 100-шер пăтран кая мар тырă туса илме сăмах параççĕ.

Çапла ĕçлеççĕ, çапла ĕмĕт тытаççĕ малта пыракан колхозсемпе районсем. Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра ялхуçалăх ĕçĕсем чылайĕшĕ халĕ те вĕçленмен-ха, тумалли ĕçсем халĕ те нумай-ха. Çавăнпа та ВКП(б) Обкомĕн бюровĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлес майпа сентябрĕн 25-мĕшпе октябрĕн 25-мĕшĕ хушшинче фронтовой уйăх ирттерме йышăнчĕç.

Уйăхлăх пуçланнăранпа вунă кун ытла иртрĕ ĕнтĕ. Çак вунă кун хушшинче республикăри колхозсем пысăк ĕç туса ирттерчĕç. Çĕршер колхозсем авăн çапса пĕтерчĕç, государствăна тырă парса татрĕç, кĕрхи çĕртме туса пĕтереççĕ, выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Сăмахран, Етĕрне районĕнчи Чакнар колхозĕ кăçалхи çулшăн государствăна тырă парса татнă та килес çулшăн та 24 тонна парса хунă. Çав вăхăтрах ытти ĕçсене те ăнăçлăн туса пырать.

Анчах чылай районсемпе колхозсем фронтовой уйăхăхра та сўрĕкĕн ĕçлеççĕ, ВКП(б) Обкомĕпе Совнарком постановленийĕ çинчен, Мускав облаçĕнчи Коломна районĕнчи колхозниксем чĕнсе калани çинчен колхозниксемпе колхозницăсене анлăн ăнлантарса памаççĕ.

Илер, сăмахран, **авăн çапас** ĕçе. Ку тĕлĕшпе Вăрнар, Шупашкар, Ишлей, Элĕк районĕсем **малта** пыраççĕ пулсан, Тăвай, Первомайски, Шăхасан, Советски районсем калама çук вăраххăн ĕçлеççĕ. Тăвай районĕ фронтовой уйăхлăх пуçланнă тĕле авăн çапмалли плана 45,5 процент тултарнă пулнă. Уйăхлăхри вунă кун хушшинче плана мĕнпурĕ те 13 процент чухлĕ çеç пурнăçа кĕртнĕ. Мĕн çитмест-ха кунта? Ĕç вăйĕ çитмест-и, лашасем сахал-и е урăх сăлтавсем пур-и? Кунта пурте çителĕклех: ĕç вăйĕ те, лашасем те. Анчах çав ĕç вăйне, лашасене тата машинăсене кирлĕ пек ĕçлеттерни çук. Çавăнпа та район юлса пырать.

Государствăна тырă парассине те чылай районсем çителĕксĕр туса пыраççĕ. Шăмăршă, Первомайски, Чкаловски тата ытти хăшпĕр районсем хăйсем йышăнакан кайри вырăнсене никама та парасшăн мар пулас. Вĕсем социализмлă ăмăрту пуçланнăранпах хўрере сĕтĕрĕнсе пыраççĕ, фронтовой уйăхлăхра та татăклă улшăнусемех тăваймарĕç. Çанталăк лайăх тăнă пирки кăçал çумăрсем чăрмантараççĕ теме çук, çавăнпа та ку районсенчи руководительсем урăхла сăлтавсем тупма, йывăрлăхсем çине йăвантарма тăрăшаççĕ. Хатĕрлев пункчĕсене кунĕн-çĕрĕн тырă турттарас ĕçе большевикла организацилемеççĕ.

Фронтовой уйăхлăхăн тĕп задачисенчен пĕри вăл—**кĕрхи çĕртме тăвасси** пулса тăрать. Мĕнле пырать-ха çак ĕç? Паян пичетленекен сводкăран куранă тăрăх, республика кĕрхи çĕртме тумалли плана 30 процент çеç тултарнă, çапла вара уйăхлăхри вунă кун хушшинче 13 процент чухлĕ çеç ўсĕм тунă. Кĕрхи çĕртме тумалли пилĕккунлăхри графиксене республикăри пĕр район та тултарса пымасть. Çĕмĕрле, Шăхасан, Калинински районсем пилĕккунхи графиксене 25—30-шар процент çеç тултарса пыраççĕ. Асăннă районсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хăвăртлатма пур условисем те пур. Лашасем те, çынсем те çителĕклĕ. Анчах нумай колхозсен руководителĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хакламаççĕ, ун çине çиелтен пăхаççĕ. Çак çитменлĕхе халех пĕтерес пулать.

Фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăхра пирĕн çавăн пекех тата **пахча-çимĕçсене, вăрлăхлăх акнă куракĕсене** пĕтĕмĕшпех пухса кĕртмелле, **выльăхсене хĕл каçарма** лайăх хатĕрленсе çитмелле. Анчах çак ĕçсен хăвăртлăхне те çителĕклĕ теме çук. Пачах урăхла, выльăх витисене юсас, ăшă тытакан тăвас ĕçсене чылай çĕрте юлашки вăхăтра сўрĕклетрĕç. Калинински, Первомайски, Октябрьски тата ытти районсенче вăрлăхлăх акнă куракĕсене халĕ те çуррине ытларах çеç пухса кĕртнĕ. Çав вăхăтрах вĕсен вăрлăхĕсем тăкăнса пĕтеççĕ.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсен колхозниксем хушшинче агитаци ĕçне вăйлатас пулать, вĕсене социализмлă ăмăртăва анлăн хутшăнтарса, ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене хăвăрт туса пĕтерме, Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнине çĕнĕ çитĕнўсемпе кĕтсе илме мобилизацилес пулать.

Вăрнар районĕнчи колхозниксем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртрĕç

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарьне ЧАРЫКОВ юлташа

Чăваш АССР Совнаркомĕн председательне МАТВЕЕВ юлташа

Паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса тата Тăван çĕршыва фашистла ирсĕрсенчен хăвăртрах тасатма пирĕн воинсене пур майпа та пулăшас тесе, Вăрнар районĕнчи колхозсем хамăрăн тăван аттене Иосиф Виссарионович Сталин юлташа хăйсен хирĕсенче вăйлă тырпул туса илме, ăна пĕр пĕрчĕ çухатмасăр пуçтарса кĕртме тата государство умĕнчи пур парăмсене те срокчен парса татма сăмах пачĕç. Паян Сире çакна пĕлтеретпĕр: эпир хамăрăн сăмаха пурнăçа кĕртрĕмĕр. Уйхирсенче хастарлăн ĕçлесе, Вăрнар районĕнчи колхозсем нумайĕшĕсем гектар пуçне 100-шер пăт тырă туса илчĕç, вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: Анаткас Хапăс колхозĕ (председателĕ Семенов юлташ), Иртеменкасси колхозĕ (председателĕ Зайцев юлташ), Элмен Сунар колхозĕ (председателĕ Максимов юлташ), Кушăк колхозĕ (председателĕ Лукин юлташ), Одиково колхозĕ (председателĕ Волков юлташ), Кольцовка колхозĕ (председателĕ Васянин юлташ), Хура Çырма колхозĕ (председателĕ Леоньтев юлташ), Çĕн Алтăш колхозĕ (председателĕ Иванов юлташ), Уравăш колхозĕ (председателĕ Васильев юлташ), Анаткас Уравăш колхозĕ (председателĕ Кузьмин ылташ), Хирпуç колхозĕ (председателĕ Андреев юлташ), Рункă колхозĕ (председателĕ Скворцов юлташ), Çĕрпел колхозĕ (председателĕ Ваганин юлташ), Хурнсур колхозĕ (председателĕ Федоров юлташ).

Пирĕн районри колхозсем пурте государство умĕнчи хăйсен обязательствисене пур культурăсем тĕлĕшпе те тултарчĕç: тырă памалли плана—100 процент, аш-какай памалли плана 135 процент, сĕт памалли плана—102 процент, çăмарта—102 процент, çăм—109 процент, утă—100 процент, çĕрулми памалли плана 104 процент тултарчĕç. Районри колхозсем нумайĕшĕсем вăрлăх фондне, страховой тата выльăх апачĕсен фондне пĕтĕмпех хывса хăварчĕç, пухса илнĕ тырпула ĕçкунĕсем тăрăх валеçме пуçларĕç.

Пирĕн районри колхозсем 1944-мĕш çулта та кашни гектар пуçне 100 пăт тырă пухса илсе амбара кĕртессишĕн социализмлă ăмăрту пуçласа ячĕç, вăл задачăна пурнăça кĕртетпĕр тесе Сталин юлташа сăмах пачĕç. Районри колхозниксемпе колхозницăсем малалла та икĕ хут, виçĕ хут вăйлăнрах тăрăшса ĕçлĕç, ылханлă тăшмана хăвăртрах аркатса тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара мĕнпур майсемпе пулăшса пырĕç.

Хамăрăн Тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларакан паттăр Хĕрлĕ Çара мухтав!

Сывă пултăр пирĕн Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ **Коротков**, райсовет исполком председателĕн заместителĕ **Осипов**, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ **Максимов**, Наркомзагăн районри уполномоченнăйĕ **Игорев**, Заготзерно пункчĕн директорĕ **Клибышев**, МТС директорĕн заместителĕ **Лукин**, колхоз председателĕсем: **Семенов, Зайцев, Максимов, Лукин, Волков, Васянин, Леоньтев, Иванов, Васильев, Кузьмин, Андреев, Скворцов, Ваганин, Федоров,** т. ыт. те.

Чугун çулсене хĕле хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе иртекен вунăкунлăх

Ишлей, Шăхасан тата Красноармейски районсенче васкамаççĕ

Чугун çулсене хĕле хатĕрлеме пулăшас тĕлĕшпе иртекен вунăкунлăх пуçланнăранпа виçĕ кун иртрĕ ĕнтĕ. Çак кунсенче чугун çул организацийĕсем чылайĕшĕсем хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем турĕç. Анчах та вунăкунлăх сўрĕккĕн иртсе пырать-ха.

Вунăкунлăхра тумалли ĕçсене пурнăçа кĕртме, чи малтан, чугун çул çывăхĕнчи районсен тата хуласен ĕç вăйĕ кирлĕ таран уйăрса памалла. Çакна чылай районсем тумаççĕ-ха. Ишлей районĕнчен чугун çул çинче иртнĕ виçĕ кун хушшинче пĕр çын та ĕçлемен. Красноармейски, Шăхасан тата ытти чылай районсенчен те ĕçлеме пыракансем питех те сахал. Çĕрпў районĕ те мухтанма пултараймасть. Чăн та, унта чугун çулсене хĕле хатĕрленме пулăшас ыйтăва ялсоветсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕнче сўтсе явнă. Анчах, апла пулин те, ĕçлеме тухакансем сахал.

Чугун çул работникĕсен çемьисене ĕçе явăçтарасси те япăх пырать. Партипе профсоюз организацийĕсем вăл енĕпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕ чугун çулсене хĕле хатĕрленме пулăшас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене татăклă кăтартусем панă. Вăл кăтартусене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле.

Чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана тултарнă

Шăхасан районĕнчи колхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли виççĕмĕш кварталти плана срокчен ирттерсе тултарчĕç. Вăрман хатĕрлевĕнче Туçи Çармăс, Ухман, Уйкас Кипек ялсовечĕсенчи колхозсем лайăх ĕçлерĕç.

Анчах вутă хатĕрлес тĕлĕшпе пур колхозсем те тивĕçлипе ĕçлемеççĕ-ха. Çĕнĕ Мами ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе хисепленекен, Хурамалти «Ильич», Ешкилтри «Большевик» тата ытти чылай колхозсем сентябрь уйăхĕнче вăрманта ĕçлеме пĕр çын та уйăрса яман.

Кăçал районăн чугун çул валли вутă пĕлтĕрхинчен икĕ хут нумайрах хатĕрлемелле. Плана уйăхран уйăха тултарса пымашкăн вутă хатĕрлес ĕçе пур колхозсене те активлăн явăçтармалла.

С. АСЛАН.

ВЛКСМ Обкомĕнче

Ленинла—Сталинла комсомол 25 çул тултарнă кун çывхарса килнĕ май ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ çитес вырсарникун—октябрĕн 10-мĕшĕнче—ачасене пулăшмалли фонда хывмашкăн комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне ирттерме йышăнчĕ.

ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсене, комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсене çав воскреснике предприятисемпе учрежденисенчи тата шкулсенчи комсомолецсемпе çамрăксене активлăн хутшăнтарма хушрĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

* * *

Полесье облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшманăн танксемпе автомашинăсем турттарса пыракан эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушени пулнă вырăна нимĕçсем çав çула тасатса юсама уйрăм поезд янă. Çак поезд хăй те минăсем çине пырса кĕрсе сирпĕнсе кайнă. Пĕр паровоз тата çул юсамалли хатĕрсем тиенĕ 7 платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 707-мĕш дивизийĕнчи 747-мĕш полкри 4-мĕш ротăн тыткăна лекнĕ командирĕ обер-лейтенант Ганс Майер çапла каласа панă: «Икĕ эрне хушшинче пирĕн полк йывăр сухатусем тÿсрĕ. Манăн ротăра 70 çын вилсе е аманса пĕтрĕç, халĕ ротăра мĕн пурĕ те 20 салтак кăна. Полк, пачах транспорт хатĕрĕсемсĕр тенĕ пекех тăрса юлчĕ. Пирĕн дивизи салтакĕсем унччен яланах хуралта тăратчĕç, ку таранччен çапăçăва хутшăнманччĕ. Йывăр сухатусем пулнă пирки, командовани 707-мĕш дивизие те çапăçăва кĕртсе ячĕ. Салтаксем кăна мар, халĕ офицерсем те нумайĕшĕ Германия çĕнтерессине шанми пулчĕç. Нумай пулмасть, пĕр капитан хăй шанакан офицерсен ушкăнĕнче çапла каларĕ: «Шыва путакан çын улăм пĕрчинчен ярса илет, теççĕ; пирĕн командованин тактики те çавăн евĕрлех», терĕ. Çавăнта пулнă аслă офицер ăна хирĕç çапла каларĕ: «Эсĕ ĕнтĕ ытларах калатăн. Эпир халлĕхе путмастпăрха, çавара шыв леккипе вăхăчĕ-вăхăчĕпе антăхса кăна илетпĕр», терĕ. Ана хирĕç вара капитан çапла каларĕ: «Вăл яланах çапла пулать: малтан антăхса каяççĕ, унтан вара шыв тĕпне путса анаççĕ», терĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Чернигов облаçĕнчи Ольшана ялĕнчи çынсем çапла каласа панă: «Сентябрĕн 8-мĕшĕнче тахăшĕ пирĕн ялтан инçех мар вырăнта пĕр нимĕç салтакне вĕлернĕ. Гитлеровецсем çав кунах пирĕн ял халăхне хупăрласа илчĕç. Фашистла ирсĕрсем пÿртсенче, урамра, плахчасенче тата уйра та ачасемпе хĕрарăмсене тата ват çынсене ярăнтытрĕç. Ольшанăран тата кÿршĕри ялсенчен 120 çынна ытла тытса хупрĕç. Тепĕр кунне вĕсене пурне те «Ярок» ятлă раща патне хăваласа кайрĕç. Кунта фашистла ирсĕрсем вĕсене хăйсене пытарма шăтăксем чавтарчĕç, вара çав шăтăксем патне иле-иле пырса, кашнине ĕнсерен пистолетпа пере-пере вĕлерчĕç. Гитлерла çынçиенсем хĕрарăмсемпе ачасене нумайĕшне шăтăка юн сăрăхса выртакан вилесем çине ирĕксĕр выртарчĕç, вара çав выртакан ачасемпе хĕрарăмсене пере-пере вĕлерчĕç. Фашистла ирсĕрсем хĕрарăмсене кăна мар, пĕчĕк ачасене те пере-пере пăрахрĕç. Персе вĕлернисем хушшинче çаксем пур: 10 çулхи Ганна Ролик, унăн 5 çулхи йăмăкĕ Евдокия, 9 çулхи Галина Кученко, 45 çулхи Маланья Шевела, унăн 13 çулхи хĕрĕ Елена, 60 çулхи Ульяна Бурячок, унăн 17 çулхи хĕрĕ Александра, 13 çулхи Иван Черниченко, 14 çулхи Надежда Криворученко тата ыттисем те».

Фронтовиксене — уяв парнисем

КУКЕÇ, октябрĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрьти Социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă уяв ячĕпе районри колхозсемпе колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парнесем яма хатĕрленеççĕ. Илпеш ялсоветĕнчи «Красный командир» колхоз 300 килограмм çĕрулми, 5 килограмм ыхра тата ытти кучченеçсем ярать. Кукеç ялсоветĕнчи «Трактор» колхоз фронта яма 5 килограмм пыл, 100 çăмарта. Иккасси ялсоветĕнчи «Красное знамя» колхоз 20 килограмм какай, 30 килограмм тулă çăнăхĕ районри комиссие леçсе панă. «Осоавиахим» колхоз 50 килограмм какай, 150 çăмарта, 100 килограмм тулă çăнăхĕ хатĕрлесе хунă.

Е. ПЛОТНИКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене — ăшă тумтирсем

СЕНТЕР. Ярославка ялсоветĕнчи «Первая борозда» колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса, паттăр боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатрĕç. 76 çулхи колхозник Матвей Кудряшов (унăн виçĕ ывăлĕ фронтра) пĕр тир тата 400 грамм çăм, колхоз председателĕ Антонов юлташ пĕр тир, пĕр мăшăр алса тата çăм пачĕç. Колхозра кĕске вăхăт хушшинчех 21 тир, çăм алсасемпе алшăллисем тата ытти япаласем те чылай пухăнчĕç.

З. СЕМЕНЧУК.

ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

Тырпул хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн районсем хушшинче пуçланнă социализмлă ăмăрту октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Мисемĕш вырăн йышăннă	Тырпул хатĕрлемелли плана пурнăçланă (процентпа)
Вăрнар	1	102,8
Етĕрне	2	101,1
Сĕнтĕрвăрри	3	93,2
Шупашкар	4	89,7
Калинино	5	87,5
Канаш	6	85,4
Советски	7	81,6
Вăрмар	8	80,4
Сĕнтĕр	9	78,4
Октябрьски	10	76,7
Шăхасан	11	75,5
Çĕрпÿ	12	75,2
Куславкка	13	74,1
Элĕк	14	73,4
Йĕпреç	15	68,1
Красноармейски	16	67,1
Ишлей	17	65,8
Хĕрлĕ Чутай	18	65,5
Улатăр	19	63,8
Çĕмĕрле	20	59,5
Тăвай	21	58,3
Комсомольски	22	57,3
Елчĕк	23	54,4
Первомайски	24	49,3
Кувакино	25	46,6
Чкаловски	26	45,0
Пăрачкав	27	26,6
Шăмăршă	28	24,7
ЧАССР тăрăх		66,5

График пурнăçа кĕрсе пырать

ЕТĔРНЕ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). 1943-мĕш ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татассишĕн Вăрнар районĕнчи колхозниксем пуçарнă социализмлă ăмăрту халь колхозсенче татах вăйланчĕ. Фронтовой вунăкунлăхăн задачисене пурнăçласси, Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнине пысăк çитĕнÿсем туса кĕтсе илессипе çыхăнса, хăйĕн пĕлтерĕшне нумай ÿстерчĕ. Мускав облаçĕнчи Коломна районĕнчи ялхуçалăх работникĕсем Октябрьти аслă уява çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме чĕннине пирĕн Етĕрне районĕнчи колхозсем кăмăлласа йышăнчĕç. Государствăна тырă хатĕрлесе памалли плана тултарнă хыççăн нумай колхозсем халь государствăна килес çулшăн тырă параççĕ. Чаканарти «Парижская Коммуна» колхоз (председателĕ Зыбин юлташ) çак иртнĕ вунă кун хушшинче государствăна аванс шучĕпе 26,5 тонна тырă пачĕ. Фронтовой уйăхлăхăн вунă кунхи графикне район ирттерсе пурнăçларĕ. Колхозсем хатĕрлев пунктне 1.318 тонна çĕрулми леçсе пачĕç. Стрелецкинчи Буденный, Полянкăри Киров ячĕпе хисепленекен тата ытти нумай колхозсем государствăна çĕрулми памалли плана нумай иртерсе тултарчĕç.

И. ЩЕПЕТОВ.
Райуполнаркомзаг.

Государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатмалла

ЭЛĔК, октябрĕн 6-мĕшĕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Кунта ĕнер коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. ВКП(б) Обкомĕн XVI-мĕш пленум решенийĕсене сÿтсе яврĕç. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ М. Федотов юлташ фронтовой уйăхлăхăн вунăкунхи итогĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Районри колхозсемпе колхозниксем фронта пĕтĕм вăйпа пулăшма тăрăшаççĕ. Район кăçал тырăсене 18 ĕç кунĕнче вырса пĕтерчĕ, октябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса лартнă, октябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне мĕнпур тырăн 81 процентне çапса кĕртнĕ, кĕракин планне 113 процент тултарнă.

Районăн ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах туса пыма лайăх условисем пулнă. Анчах чылай колхозсем ĕçе тĕрĕс организацилемен. Çулавăç, Тури Панкли, Писĕп, Мăн Шĕвĕш, Янăш колхозĕсем уйрăмах начар ĕçлерĕç, уйхир ĕçĕсене вăхăтра тăвайманĕç, тырра чылай тăккаларĕç. Çавна пула государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçласси те юлса пырать. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ панă график тăрăх, районăн октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна 1943 çулта тырă памалли плана 80 процент тултармаллаччĕ, анчах 70 процент çеç тултарнă.

Уйрăм колхозсем питех те сÿрĕк ĕçлеççĕ. Вылăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă памалли плана 18 процент çеç пурнăçланă.

Атмалакасси колхозĕ октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 14 процент çеç пурнăçланă. Кунта парторганизаци пур. Анчах унăн секретарĕ Сидорова юлташ государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе ку таранччен тивĕçлĕ мерăсем йышăнман-ха.

Пуху государствăна тырă парас ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕ. ВКП(б) Обкомĕн XVI-мĕш пленум решенийĕсене тĕпе хурса ĕçлесе, пуху государствăна тырă парас ĕçре халех татăклă улшăну тума йышăнчĕ.

Пухура Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Андреева юлташ пулчĕ. Вăл Элĕк районĕ фронтовой уйăхлăхра çитерĕксĕр ĕçленине нумай фактсемпе çирĕплетсе пачĕ. Чылай колхозсенче ĕçе тĕрĕс организацилемен. Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен пирвайхи тивĕçлĕхне пурнăçласси çинчен маннă руководительсене ответ тыттарман. Çавăн пирки ĕнтĕ хăшпĕр колхоз председателĕсем фронтовой уйăхлăх пуçлансан та государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатман.

Октябрьти социализмлă аслă революци XXVI çул тултаракан уяв çитиччен шутлă кунсем юлчĕç. Аслă уява çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илмелле. Фронтовой уйăхлăхра государствăна тырă парас ĕçе вĕçлес пулать.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇСЕНЕ ВĔÇЛЕССИ ТАТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТАВАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарнă
Ишлей	83,9	100,0	25,8
Сĕнтĕр	83,1	100,0	38,6
Шупашкар	82,5	92,8	42,4
Йĕпреç	82,5	95,4	26,3
Элĕк	82,0	84,0	30,0
Шăмăршă	81,9	95,2	26,5
Вăрнар	80,9	97,9	35,3
Куславкка	77,4	82,3	32,8
Вăрмар	77,2	87,5	27,4
Çĕмĕрле	77,0	85,6	27,1
Красноармейски	73,5	96,8	35,7
Хĕрлĕ Чутай	73,5	93,3	25,2
Улатăр	72,8	76,7	29,3
Октябрьски	71,8	94,4	43,9
Пăрачкав	71,8	65,1	25,8
Канаш	71,6	98,6	24,4
Етĕрне	71,3	98,2	42,9
Елчĕк	71,1	98,4	40,7
Калинино	70,2	93,2	28,9
Сĕнтĕрвăрри	70,0	94,0	32,6
Кувакино	70,0	52,6	17,2
Чкаловски	69,1	87,1	30,5
Çĕрпÿ	68,9	95,8	31,6
Советски	66,8	99,7	31,6
Комсомольски	55,8	97,1	28,7
Шăхасан	63,9	100,0	24,8
Первомайски	63,8	100,0	23,1
Тăвай	59,4	98,5	24,9
Шупашкар хули	69,9	100,0	57,6
ЧАССР тăрăх	73,7	93,2	30,9
Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă	67,3	79,3	24,5

Фермăсем хĕле хатĕр

Тури Сурăмри (Шăхасан районĕ) «Заря» колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисене фронтран аманса килнĕ П. Прокопьев ертсе пырать. Фронтовой уйăхлăха хутшăнса, фермăра ĕçлекенсем выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Витесенчи тислĕке йăлтах тасатнă, шăтăк çурăксене питĕрнĕ. Выльăхсене апат памалли куритесемпе вăлашкасене юсанă, çĕнĕрен те тунă. Ферма йĕри таврах çĕнĕ карта тытса çавăрнă. Сыснасене апат пĕçерсе памалли кухньăна та юсанă.

Çак ĕçсене пĕтĕмпех фермăра ĕçлекенсен вăйĕпе тунă. Пуринчен ытларах Ф. Андреева, Ф. Терентьева, Е. Степанова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем выльăхсене те аван пăхаççĕ.

Кăçал колхозра хур фермине организациленĕ. Халĕ хурсем усрама вите тăваççĕ.

Ст. АСЛАН.

„III Интернационал" колхозра йĕркелĕх çук

ШАХАСАН. Чуракасси ялсоветĕнчи «III Интернационал» колхозра ĕç дисциплинине чăтма çук япăхтарса янă. Кунта колхозниксем ĕçе ирхине 8—9 сехетре тин тухаççĕ. Бригадирсем ĕçе йĕркелес вырăнне хăйсен килĕсенче ытларах пулма юратаççĕ, колхозниксене пĕр уйăх хушши ĕçкунĕсем шутласа памасăр тăраççĕ. Колхоз председателĕ Г. Ильин та ĕçри дисциплинăна çирĕплетессишĕн тăрăшмасть, ĕçе тухман колхозниксене хÿтĕлесе пырать.

Ку колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем нумай. И. Алексеева, А. Фадеева, И. Ефремова, К. Иванова колхозницăсем ку тарана çитсе 30—40-шер ĕçкунĕ çеç тунă. Колхоз правленийĕ вĕсене айăпламасть. Йăлтах урăхла, 7 кун хушши пĕр сăлтавсăр ĕçе тухман К. Иванова колхозницăна аванс йĕркипе тырă çырса панă, çапла вара колхозниксене аванс парас йĕркене пăснă.

Авăн çапнă çĕрте те нимĕнле йĕркелĕх те çук. Итемсем çинче хурал çук. Çапнă тырпула нихăçан та çав кунах амбара кĕртмеççĕ, 2—3 кун хушши итем çинче выртараççĕ. Бригадирсем те куллен мĕн чухлĕ авăн çапнине тата амбара мĕн чухлĕ тырă кĕртнине çырса пымаççĕ.

Лашасемпе йĕркеллĕн, асăрханса ĕçлемен пирки кăçал 20 лашана хăмăтсем тивертсе стройран кăларнă. Лаша таврашĕсемпе урапасене килĕрен салатса пĕтернĕ.

Колхозри ревизи комиссийĕ япăх ĕçлет, 2-мĕш кварталшăн халĕ те ревизи туса пĕтермен. Çакăн пек япăх ĕçленине пула ку колхоз пур ĕçре те юлса пырать. Кĕрхи çĕртме тума халĕ те тытăнман.

Çакăн пек япăх ĕçленине малашне чăтма çук. Партин Шăхасан райкомĕпе райсовет исполкомĕн ку колхоз пирки халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт та ăнăçлăн вĕçлессишĕн пыракан фронтовой уйăхлăха хутшăнса ĕçре татăклă улшăнусем тумалла.

И. ИВАНОВ.

Комсомол райкомĕн планĕпе ĕçĕсем

КАНАШ. (Хамăр корр.). ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ А. Павлова юлташ пĕлтернĕ тăрăх, районра кашни колхозрах комсомолăн пуçламĕш организацийĕ пур, ĕçĕсем те вĕсен начарах мар.

Эпир уйрăмăнах хăш колхозри организаци лайăх ĕçленипе интереслентĕмĕр.

— Комсомол организацийĕсем пурте пĕр пекрех ĕçлесе пыраççĕ,—терĕ Павлова юлташ.

Чăнах та, çиелтен пăхсан, пур колхозсенчи пуçламĕш комсомол организацийĕсем те пĕр-пĕринчен юлмасăр ĕçлесе пыраççĕ темелле.

ВЛКСМ райкомĕ хăйĕн ĕçне планпа туса пырать. Планра чылай ĕçсем палăртнă. Кашни колхозрах комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем пулмалла, уйхир ĕçĕнче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пымалла.

Мĕнле пурнăçа кĕртеççĕ-ха кунта планпа палăртнă ĕçсене? Калас пулать, ВЛКСМ райкомĕн планри нихăш мероприятийĕ те кирлĕ пек пурнăçланса пымасть. Районра 54 пуçламĕш организаци шутланса тăрать, вĕсенчен 6-шĕ шкулсенчи организацисем.

ВЛКСМ райкомĕ уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе планра палăртнă мероприятисене комсомол организацийĕсем патне çитермен. Вĕсене ку ĕнĕпе кăтартусем те паман. Районра 48 колхозран пĕринче те комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем организацилемен. Шмидт, Киров ячĕсемпе тăракан, «Мотор», «Хĕрлĕ хĕм» колхозсенче çамрăксен фронтовой бригадисем хастарлăн ĕçлеççĕ, тесе пĕлтерет Павлова юлташ. Тĕрĕссине илсен, асăннă колхозсенче те комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем çук. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз—районра чи пысăкки. Ку колхозра пур ялхуçалăх ĕçĕсем те юлса пыраççĕ. Сентябрĕн 12-мĕшĕнче государствăна тырă парас енĕпе республикăра комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пулса иртрĕ. Çав кунта ку колхозран государствăна нимĕн чухлĕ те тырă леçмен. Комсомол организаци секретарĕ А. Мурзаева юлташ колхоз ĕçĕнче хăй те сайра хутра çеç пулать.

Районра комсомолăн 7 пуçламĕш организацийĕнче секретарьсем çук. Иртемен Кушăкри «Чуваш. ЦИК», Çăлпуçĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозсенчи организацисем пĕлтертенпех секретарьсăр пурăнаççĕ.

ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем вăхăта пуринчен ытла кабинетра ларса иртереççĕ.

— Эпир планпа ĕçлетпĕр. Кашни работникăн хăйĕн участокĕ пур, — теççĕ ВЛКСМ райкомĕнче ĕçлекенсем.

Тÿрех каласан, кунта ĕç планĕ пур, анчах ĕçĕ çук.

Ф. МАЛЫШКИН.

Пирĕн авиаци Жлобин чугун çул тĕввине, Рогачев, Васильевка тата Мелитополь станцийĕсене тапăнни

Октябрĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци тăшманăн Жлобин чугун çул тĕввинчи, Рогачев, Васильевка тата Мелитополь станцийĕсенчи çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнипе 6 поезд сирпĕнсе кайнă. Нумай гĕлсенче пушарсем тухнă, вагонсем, цистернăсем тата çар склачĕсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Çав çĕрлех пирĕн авиаци тăшманăн пĕр пысăк аэродромне тапăннă. Бомбăсем нимĕç самолечĕсем тăнă вырăнсенче, вĕçсе хăпармалли вырăнсенче тата аэродромпа юнашар районри складсем хушшинче çурăла-çурăла кайнă. Темиçе тĕлте вăйлă взрывсем пулнă, горючи склачĕсем хытă çунма тытăннă.

Пирĕн пĕр самолет хăйĕн базине таврăнман.

Ют çĕршывсенче

ССР Союзĕн США-ри посолĕ Громыко юлташ Рузвельт президента хăйĕн верительнăй грамотисене панă

ВАШИНГТОН, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Государственнăй департамент çапла пĕлтерет: ССР Союзĕн Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи посолĕ Громыко юлташ Рузвельта хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Верительнăй грамотисене панă чухне Громыко юлташпа Рузвельт президент пĕр-пĕрне саламласа сăмахсем каланă.

Гарриман ТАСС корреспондентне каласа пани

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Гарриман ТАСС корреспондентне çапла каласа панă: «Президент сената Пĕрлешÿллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ пулма манăн ята сĕнсе каланипе эпĕ савăнатăп, ăна эпĕ мана пысăк чыс туни вырăнне хуратăп. Çак историллĕ вăхăтра Сирĕн çĕршывра ĕçлесси питĕ пысăк телей пулса тăрать тесе шутлатăп»,—тенĕ.

Черчилль совет профсоюзĕсен делегацийĕ ячĕпе йышăну тунă

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 5-мĕшĕнче премьер-министр Черчилль хăй пурăнакан çуртра ВЦСПС секретарĕ Н. М. Шверник тата вăл ертсе пыракан совет профсоюзĕсен делегацийĕ ячĕпе йышăну туса иртнерне. Черчилле делегаци членĕсемпе сер Уолтер Ситрин паллаштарнă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 4-мĕшĕнче Англи çарĕсен чаçĕсем Германи çарĕсен позицийĕсем хыçĕнчи Термоли ятлă пĕчĕк яла (Адриатика тинĕсĕ хĕрринче) сасартăк анса ларнă. Халĕ çав çарсем Вăтаçĕр тинĕс патнелле каякан çулăн хĕвелтухăçĕнчи пайне йышăннă. Çакăн хыççăн акăлчансен 8-мĕш армийĕн сылтăм флангĕ 10 мильăна яхăн малалла куçнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕ Беневенто хулинчен хĕвеланăçнерехре ларакан Монтесарико пунктне тытса илнĕ те, тăшман вăйлăрах хирĕç тăнă пулин те, çаплах малалла куçса пынă. Союзниксен çарĕсем патне пулăшу пырсах тăрать, вĕсем тăшман ишсе хăварнă кĕперсене хăвăртăн юса-юса лартаççĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕ тăшманпа Термоли хулинчен хĕвеланăçнерехри районра тата Биферно шывĕ патĕнче çапăçать. Унта хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕ, Неапольтен çурçĕрелле куçса пырса, Помильяна д'Арко тата Каподикино патĕнчи 2 аэродрома йышăннă.

Помильяно д'Арко патĕнчи аэродромра 100 самолет кÿлепине ытла тупнă. Вĕсене союзниксен авиацийĕ çав аэродрома тапăннă чухне çĕмĕрсе тăкнă е тăшман хăех чакас умĕн пăсса хăварнă.

КОРСИКАНА ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕНЧЕН ТАСАТСА ПĔТЕРНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви француз çарĕсен штабĕ пĕлтернине панă. Пĕлтерÿре çапла каланă: «Корсика çине малтанхи хут аннăранпа 20 кун иртнĕ хыççăн француз çарĕсем утрава гитлерла оккупантсенчен тасатса пĕтерчĕç. Француз çарĕсен сухатăвĕсем çав тери сахал пулчĕç. Трофейăсем нумай тытса илтĕмĕр», тенĕ.

Германи çарĕсем Кос утравĕ çине пырса аннă

ЛОНДОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 3-мĕшĕнче тăшманăн чылай йышлă вăйĕсем Кос утравĕ çине аннă (Кос утравĕ вăл Додеканез утравĕсен ушкăнĕнче). Çав утрава нумаях пулмасть союзниксен çарĕсем йышăннăччĕ. Тăшманăн çарĕсем темиçе паха пункта тытса илнĕ. Халĕ утрав çинче çапăçусем пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Кос утравĕ патĕнче тăракан суднисене атакăланă. Германин Родоспа Крит утравĕсем çинчи аэродромĕсене те тапăннă.

КОС УТРАВĔ ÇИНЧИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Кос утравĕ çинче союзниксен çарĕсем унта анса ларнă Германи çарĕсемпе çаплах çапăçаççĕ.

Октябрĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем нимĕçсен Марітцери, Калатăри (Родос утравĕ) тата Крит утравĕ çинчи аэродромĕсене тапăннă. Акăлчансен пур самолечĕсем те хăйсен базисене таврăннă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ГАННОВЕРА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 3-мĕшĕнче акăлчансен «Москито» йышши самолечĕсем Ганновер хулине тата Рейн облаçĕнчи объектсене тапăннă. Тата çавăн пекех акăлчансен ытти самолечĕсем тăшман шывĕсенче минăсем пăрахса тухнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ФРАНКФУРТА ÇĔНĔРЕН ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен авиацийĕ Франкфурта çĕнĕрен тапăннă.

Германие ĕнер тапăннă чухне тăшман вăйлăн хирĕç тăнă. Союзниксен авиацийĕ сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 56 истребительне персе ÿкернĕ. Союзниксен 17 самолет пĕтнĕ.

Кассель хулине октябрĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тапăннă чухне хула çине 1.500 тонна бомба пăрахнă.

Нимĕç авиацийĕ октябрĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин кăнтăр пайĕнчи уйрăм пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Сиен пысăк мар. Вилнисемпе аманнисем çук.

КĔСКЕН

- Акăлчансен «Тайфун» йышши истребителĕсем октябрĕн 5-мĕшĕнче Париж çине вĕçсе тухнă та тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ.
- Данире нимĕçсем валли ĕçлекен предприятисемпе оборудованисене сирпĕнтерсе ярасси тата çĕмĕресси чарăнмасть. Дани столицинче Копенгагенра атă-пушмак тăвакан пысăк фабрикăна сирпĕнтерсе янă. Копенгаген таврашĕнче Дани патриочĕсем нимĕçсен 16 автомашинине пĕтерсе тăкнă.
- Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсĕнчи тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ пулнă флот адмиралне Эндрью Кэннингхэма Великобританин тинĕс ĕçĕсен пĕрремĕш лорчĕ тата тинĕс-çар вăйĕсен главнăй штабĕн начальникĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Виççĕмĕш квартал ĕçĕ пĕтнĕ май ЧĂВАШПРОМКАССА промартельсене çитес октябрь уйăхĕн 8-мĕш числиччен сентябрь уйăхĕшĕн тумалли страховой начислениссен расчет ведомоçĕсене тăратма ыйтать, çавăн пекех тата октябрĕн 20-мĕшĕччен 1943 çулхи взаимнăй расчетсене тĕрĕслесе тухас пулать. Кăтартнă вăхăтсем иртсен нимĕнле претензисене те йышăнмастпăр.

ЧĂВАШПРОМКАССА.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0.67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.